к-12

КАПКĂН 4-мĕш №

# ШУПАШКАР ХУЛИ.

(Историпе кеокрахви).

Хула вырăнĕ. Шупашкар хули историре паллă пулнă вырăнта ларат̆. Вăл вырăнта ĕлĕк Макар кĕтўçĕ пăрусене кĕтсе çўренĕ. Хула клопус çинчи хăш кратусра ларнине тўрех калама пултараймастпăр, анчах пирĕн шухăшпа, Шупашкар кратуссăрах пурăнмаст̆ пулмалла. Анчах ку кратус çĕр кратусĕ мар, çуттин кратусĕ. Хăш чухне, пупсен пысăк праçнăкĕсенче 40 кратусран та иртсе кайат̆ пулмалла хула хĕрўллĕхĕ.

Хула халăхĕ. Хулара пуринчен ытла мешчен йатлă халăх пурăнат̆, авалхи ăруран. Кив тĕнче çав ăруран пуçланса кайнă ĕнтĕ. Вĕсем пит ырă кăмăллă. Вăл çакăнтан паллă: есĕ вĕсем патне хут йе кĕмĕл укçасем илсе пырсан, санăн çийе йăпăшăн пăхса илеççĕ, хаваслансах хапăл тăваççĕ. Йулашки вăхăтсенче ытти ăрури халăхсем те Шупашкара кĕрсе вырнаçнă, вĕсем кулен кунĕн ўссе пыраççĕ (пит ĕрчекен йăхран), кăсем çĕнĕ йăхран, револ̆утси хыççăн тин çийеле тухрĕç, анчах кунта вĕсем çинчен каламăпăр, вĕсем çинчен «Канаш» йатлă пысăк истори кĕнекинче çырăпăр.

Йăвăç-курăксем (флора). Хула çўлте кăтартса панă вырăнта ларнăран, вăл йенче ўсĕрлсе çўрекенсем çинчен çырнă мăн проттоколсем ўсеççĕ. Çуркуннехи ăшă кунсем çитсен, Атăл хĕрĕнчи ту ула-чăла хĕрсемпе хупланса илет, йурату йатлă курăк, тата çав майлă ытти «çум» курăксем те ўсеççĕ.

Кайăк таврашĕсем (фауна). Шупашкарти хăш-хăш урамсенче климăт улăшăнсах пĕтмен, çавăнпа та унта вилсе пĕтес патне çитнĕ хăш-хăш выԓăх ăраттисем халĕ те сахал мар пурнаççĕ.




Ўсламçăсем—ерешмен йышши йăхран. Вĕсем хăйсен тетелĕсене пур иртсе çўрекенсене те астарса кĕртме тăрăшаççĕ. Ухмах шăна çакланса ларсан, вара вĕсен пурнăçĕ çитнĕ — пĕтĕмпех ĕмсе йулаççĕ.

Пупсем—ăйăр ăрăвĕнчен. Çилхисем вĕсен хура, турă, кăвак, хушка. пĕр сăмахпа каласан лаша мĕн тĕслĕ пулма пултарат̆, вĕсен çилхисем те çав тĕслех пулаççĕ. Тăранасса вĕсем—тутлă пашалусемпе, икерчĕсемпе, тата патша вăхăчĕсем килес шанчăксемпе тăранса пурнаççĕ.

Манашкăсем пăт-пат курăнкалаççĕ—качака йевĕрлĕ йапаласем. Кирпĕчрен йе йăвăçран тунă мăнастир çурчĕсенче пурăнса иртереççĕ. Тăранасса—çынсен айванлăхĕпе тăранса пурнаççĕ. Пуçĕсем майракаллă мар, пуш витре йе пукан йевĕрлĕ. Хўрисем хура, тилĕ хўри пысăккĕш.

Шупашкарти паллă вырăнсем çинчен тепĕр чухне калăпăр.

Йăван мучи.

## Иепле вулăсри пӳтшет нуша, хĕнасап тӳсет (унтан мĕскер йышăнаť, ăна çак сăвă калаť).




Шухăшланă вулпӳтшет
Йалсем тăрăх çӳреме;
Йалсем тăрăх çӳресе
Тĕрĕс-тĕкел тишкерме.
Анчах тухаť кантурган:
Акăш-макăш лачака;
Шăпах пĕçĕ тĕп таран
Путса ларчĕ пыђчăка.
Хастарланчĕ вулпӳтшет:
Чăн малтанах çак шура
Тумлам шывсăр хăварас,
Ку черетлĕ сатач, тет.

Аран-аран сĕтрĕнсе
Тухрĕ пӳтшет мăн çула;
Çĕр çăттăрах: çăпан пек
Çулĕ путăк-шăтăклă.
Тĕнĕл шатăрт! хуçăлчĕ,
Кустăрмисем ванчĕçĕ;
Сăмси йунпа хĕрелчĕ,
Пилĕк-çурăм аманчĕ.
Пăртак сывлăш çавăраť,
Унтан татаť пĕр сăмах:
— Ку çул пурне амантаť,
Йусас пулаť пайанах.




Ах ахлатса, нăйкăшса
Пилĕк-çурăм тӳрлетме
Пӳтшет пыраť пуђнитса:
Пуђнитсă хатĕр хăй вилме.

Мĕскер тăвас, хăйамат?
Пӳтшет йăвăр суранне
Тӳрлетесси вырăнне
Пуђнитсă емел хăй ыйтаť.

Çитет пӳтшет пĕр йала
Хресченсене пуçтараť,
Тухса тăраť хăй мала:
— Йулташсем! тесе пуçлаť.
— Ĕнтĕ нумай ыйтусем
Пире ĕçе чĕнеççĕ...
Хресченсем ăна хирĕç:
— Пирĕн çĕр йĕрки çук, теççĕ.
— Халăх сана ĕненсе
Шанчăк хывтăр тесессĕн,
Çĕре майа кĕртмешкĕн
Мишавайа кил чĕнсе.

Çип-и.

# АНКЕТТӐ.

(Архивран тупнӑ).

| | |
|---|---|
| 1. Йату? | Ревођутсичен Амплей, халӗ Алимпий. |
| 2. Аҫу йачӗ? | Петрович. |
| 3. Хушамату? | Ревођутсичен Петров, халӗ Петровский. |
| 4. Миҫе ҫулта | Йӑвӑр ӗҫ тӗлӗшӗнчен 56 ҫулта, ӗҫкӗ тӗлӗшӗнчен вунсаккӑрта, хӗрсемпе калаҫнӑ чух 22 ҫулта. |
| 5. Вӗренӳ? | Нумай вӗреннӗ, хӗрес хурса алӑ пусмастӑп. |
| 6. Професҫи? | Атте хресчен, ҫӗр ӗҫлесе пурӑннӑ, хӗрлӗ таварпа сутӑ тунӑ, икӗ арман тытнӑ; хама чӑн рапочи теме те йурать, мӗншӗн тесен епӗ халичен нимӗн те ӗҫлемен пулсан та, халӗ ӗҫ шырама тытӑнтӑм ӗнтӗ. |
| 7. Авланни? | Хађхи йӗркепе авланман, ӗлӗкхи арӑма, икӗ ачана шута хумастӑп. |
| 8. Парттире тӑратӑни? | 1918-мӗш ҫулта аттерен контрипутси шырама килнӗ вӑхӑтра тӑватӑ сехет хушши парттийе ҫырӑнса тӑтӑм. ҫапла аттене контрипутсинчен хӑтартӑм. |
| 9. Хӗрлӗ ҫарта пултӑни? | Хӗрлӗ ҫара аттене хисеплесе илмерӗҫ, кивӗ ҫара атте памарӗ. |
| 10. Сутлӑ пулмани? | Ӗлӗк сутлӑ пулни, икӗ уйӑх тӗрмере ларни ревођутсипе каҫнӑ, унтан вара сутлӑ пулайманха. Малалла мӗн пулӗ. |
| 11. Мӗнле ӗҫре пулта рас пек туйӑнать? | Кӗҫӗн вырӑнта ӗҫлеме пултарас ҫук, учрештени пуҫлӑхӗ пулма пултаратӑп. |
| Алӑ пусни: | Алимпий Петрович Петровский. |

---

## Халӗ тап таса.

— Учрештенисене килӗ мар елементсенчен тап таса турӑмӑр, халӗ ӗнтӗ ун пек елемент тӗсӗ те курӑнмасть.

— Йепле апла часах?

— Халӗ учрештенисенчи пупсене пӗрне те шлепкепе кураймӑн, пурте карттус туйанчӗҫ, ӗлӗкхи улпут таврашсем те сарлака кӑвак шӑлаварӗсене пӑсса ҫӗлетсе хура краскӑпа хураттарчӗҫ, кӑкрисем ҫине Совет значокӗсене ҫапрӗҫ: ҫипуҫӗнчен, пӑхсан нийепле те паллас ҫук кам иккенне.

— Шупашкар мешчен хӗрӗсене те, ӗҫ вӑхӑтӗнче пичӗсене ҫӑнӑх сӗрсе ларакансене, тасатрӑри?

— Тап тасах пулчӗ. Халӗ вӗсем ҫӳҫӗсене хитре кӑтралантарма пӑрахрӗҫ, пичӗсене те штукатуркӑ сӗрмеҫҫӗ, хресчен хӗрӗсенчен, нийепле те уйӑрас ҫук.

Пӑшатан.

## „Атӑл хуҫи“.

Туҫа йалӗнчи (Йӑлӑмкас вул.) Лексантӑр Леончӑ Атӑл ҫинче правус тытать. Каҫакансенчен укҫа хыпни ҫитмест, кашни килрен пӗрер пӑт тулӑ пуҫтарать.

Пырса кӗрет ку Лексантӑр пӗрр: чухӑн ҫын патне, пуп пек мӑн хутаҫ тытнӑ,—тавай тулӑ, тет.

— Мӗнле тулӑ, пачӑшкӑсем вађђим?

— Пачӑшка мар, хама вађђи, правус укҫишӗн илетӗп.

— Тулӑ пулман кӑҫал, тет чухӑн.

— Пулман пулсан, урпа тавай, ӑна та памастӑн пулсан, Атӑл урлӑ каҫса кураймастӑн.

— Урпи те ҫук, пурте пӗтсе ҫитрӗҫ, нимӗн те памалли ҫук.

— Апла пулсан Атӑла пырса ан курнӑ пултӑр кӑҫал.

— ?!

Арлан.

# Пахча-çимĕç картин

Пахчара тĕрлĕрен йапаласем ӳсеççĕ. Акă вĕсем:



Купăста. Пахча çинче ларнă чух вăл лайăх йапала. Йăран çине куçарса лартсан вирлĕрех сыхламалла пулаť ăна,—усалланса кайма пултараť.

Шупашкарти 3-мĕш номерлă шкулта М. Ç. Ваççилийĕва йатлă купăста пур. Ăна учитĕлнитсă пулма хушнă. Çав купăста иртĕнсе кайма пуçланă. Йалтан килнĕ ачасене йуратсах каймасť, мешчен ачисемшĕн каççах кайаť вара. Ачасене час та часах хăйне ваďďи тавар илме пасара чуптараť, теççĕ пахчари 3 курăк.



Йӳçкăшман. Йӳçкăшман вăл тымар курăкĕ. Йӳçĕ. Çисен хырăма пăсаť. Вăл пулнă çĕрте çĕр сĕткенĕ те сахалланса йулаť пулмалла, хăй çывăхĕнче ытти çимĕçсене ӳсме памасť. Вăл çакăнтан паллă: Шупашкар-Сĕмĕлĕнчи (Кĕчкей вул.) «Смычкă» йатлă пахча (кооператтив) пур. Унта йӳçкăшмансем те ӳсеççĕ. Пахчана пĕтĕмпех йурăхсăрлатса пĕтернĕ, чухăн курăк тымарĕсене çĕр сĕткенне йамаççĕ. хăйсен вăрлăхĕсене (таварĕсене) хакла çутаççĕ „Хамăр хăвалани“ пекех йӳçĕ вĕсем.

Йӳçкăшмана сыснасене пăрахса парсан усаллă теççĕ выďăх усракансем.

Кишĕр (чĕкĕнтĕр). Шухă йапала, пичĕсене хĕретсе çӳрет.



Сик - касси вулăсĕнчи Кив-кас пахчинче Тарас Мархви тейеен кишĕр пур. Сăмакункка тăваť. Хĕпхĕрлĕ çӳрет, çынтан вăтанмасť. Шурă кишĕрсем те пулаканчĕ Шуратсан шуралмĕши вăл кишĕр?



Măкăď. Унăн тувийĕ пахчари ытти çимĕçсенчен çӳлĕрех. Чечекĕ хĕпхĕрлĕ пулаť.

# чи курӑк ҫимӗҫсем.

Турай вулӑс пахчинче пӗр мӑкӑҥ пур. Ӑна Теркупов милитсионер тесе йат панӑ. Вӑл хӗрлине мар, симӗссине ӗҫет пулин те, хӗпхӗрлӗ хӗрелсе ҫӳрет, ӗҫнинчен вӑтанаӗ пулмалла.

Пӗрик хут тӑм ӳксен мӑкӑҥ хӗрлӗ чечекӗсем часах тӑкӑнаканчӗ.



Талпиҫен. Ҫум курӑкӗ. Мӑнкӑмаллӑ. Хӗрарӑм ҫӳҫӗсене ҫыпӑҫма йӳратаӗ.

Йамашри (Чурачӑк вул.) Путек Ҫтаппан Йӑванӗ йатлӑ талпиҫен пур. Хӗрарӑм ҫӳҫӗсем ӑшне кӗрсе кайса вӗсен йӳнӗсене ӗмсе илме йӳратаӗ. Мӗн кирлине ӗмсе илсен хӗрарӑмӗсене хӑвалаҫа йараӗ. Хӑш чухне тата йӑвӑр ҫын пулнӑ арӑмсен ҫӳҫӗсем ҫумне ҫыпӑҫса чирлемеллех ыраттараӗ (Евтукпа тепӗр арӑм халӗ чирлӗ выртаҫҫӗ вӑл хӗненӗрен).

Мӗн тумалла ,кунпа? Ҫӗҫӗпе касса пӑракса ҫӗр ҫумӗнче йулнӑ туни ҫине тӑвар сапмалла; ҫапла тусан талпиҫен хунама пӑрахаӗ, теҫҫӗ акрономсем.




Пӑрҫа. Ҫӑмӑл ӑслӑ, мухтанма йуратакан ҫимӗҫ-курӑк.

Питти кассинчи (Сӗнтӗр вул.) пахчара Танӳк Хвати Елекҫин шӑллӗ (мӗнле вӑрӑм хушамат!) тейекен пӑрҫа ӳсет (вӑрман пӑрҫи-лесник пулнӑскер). Пирӗн пиче ҫиччен сута паваӑшӑн, кӑҫал хамӑр йала пӗр 500 тенкӗ штрав тӳлеттеретӗп, тесе ҫӳрет пахчара. Ун йӗритавра сӑмакунккӑ путылккисем шуҫӑ пек сӑрса илнӗ.

Пӑрҫа ҫамрӑкла тутлӑ пулаӗ, ватӑлса хытма пуҫласан тути пӗтет. Миҫе уйӑхраши Питти касси пахчинчи пӑрҫа?

Йӑван мучи пахчаҫӑ.

# Тухатмӑш

(Кавриле пичи каласа кӑтартни).

Пӗрре, вӑл ӗлӗкех пулаӗ ӗнтӗ, епӗр виҫ ҫамрӑк ача — Митри, Ваҥук, (вӗсем те салтакран килнӗ анчах, епӗ хам та маттур) калӑм каҫ пӗр шут тытса тухрӑмӑр тухатмӑш шырама. Малтанах мунчасенче шырарӑмӑр. Ҫук, шуйттан ҫитӗр пуҫна, пӗр калӑм ватти те тупаймарӑмӑр. Карӑмӑр масар (ҫӑва) ҫине. Ун чух пирӗн икӗ масарчӗ: пӗри—тӗве кӗнӗ чӑвашсен, тепри—тӗне кӗмен чӑвашсен. Унта та ҫук. Уттартӑмӑр Емел масарӗ ҫине. Пӗр пилӗкултӑ ҫухрӑм ытла каймалла. Каллех пӗр тухатмӑш та ҫук. Киле пӗр тухатмӑш та пулин тытмасӑр кайас мар тесе, тепӗр вун ҫухрӑма «Вӑтӑр йуман киремечӗ» (йал йачӗ) масарӗ ҫине йара патӑмӑр. Каллех пӗр тухатмӑш йӗрӗ те ҫук.

Тарӑхса ҫитсе ҫутӑласпа киле аран ҫитрӗмӗр. Ӗнтӗ нихҫан та тухатмӑш тытма кайас ҫук тетпӗр.

Пӗр-ик-виҫ ҫултан ҫав калӑм каҫах Елентей мучи патӗнче ҫур ҫӗрченех

# Капкӑн „муҫейӗ“.



Ку ҫава Ӗскетенри (Аттай вул.) пуйан Куҫук Ваҥккин. Вӑл ҫакӑ ҫавапа хӗрарӑмсене ҫулса тӑкаспӑн. Халӑх пухӑвӗсенче: хӗрарӑмсем ытла йышланса карӗҫ, вӗсене ҫӗр парас мар, ҫавапа ҫулса сахалатмалла, тесе йавратаҕ.

Ку Ваҥккӑн ҫулма утӑ сахал пулаҕ пулас.



Ку Тукайкри (Шемшер вул.) арман хуҫи Мӗтри Хветӗрӗн шӑпӑрӗ. Вӑл ҫак шӑпӑрпа икӗ ӗҫ тӑваҕ: майӑхсене ватма пынӑ шӑшисене хӑратса йараҕ, тата чухӑнсене, арман таврашӗнче ӗҫленӗшӗн, укҫа ыйтма пырсан хӑвалаҕ.



Ку Тӗнсӗр Кушкӑ йалӗнчи (Ҫӗрпӳ вул.) Луккари манашкӑн пички. Вӑл халӑхран мӑнастир ваҕҕи тесе тырӑ пуҫтараҕ, Тырринчен самӑконкка туса ҫак пичкене тултараҕ. Комсомолӗссем ҫак пичкери „шыв“ пылакӗпе урам тӑрах кукӑс йатсах ҫӳре пуҫланӑ.



Ку Тӗнелӗнчи (Тӑвай вул.) Тухсар Иван ачи Ентрин карҫинкки. Унпа вӑл ҫӑмарта пуҫтарса патентсӑрах сутаҕ. Ҫӑмарта услам панипе ҫуттиве те сыпма лайӑх пӗлет. Таврари ҫынсем пурте ӑна палаҫҫӗ. Палламанни милитсисем анчах йулнӑ. „Капкӑн“ ретаксийӗ хӑвӑртрах паллашма хушаҕ.

лара патӑм. Ҫӗр тӗттӗм — куҫна йӗп чик.. Хамӑн пӑртак шикленес шухӑш та пур.

Урам урлӑ каҫас тесе угатӑнчӗ. Ах тур!.. Умра шурӑ курӑнсах карӗ. Пӑхатӑп, хур. Ка-ка-ка ка-ка! тет.

Чун ҫурӑлсах карӗ. Пӑхатӑп—Уҕакин арӑмӗн пӳрчӗ умӗнчех тӑратӑп. Уҕакин арӑмне йалӗпех тухатмӑш тетчӗҫ. Тата унӑн кача карман пӗр 30—35 ҫулхи хӗрӗ пурчӗ. Кӑна та тухатмӑш тетчӗҫ.

Ку ним те мар тухатмӑшах тӗрӗм хам шухӑшра.

Хайхи хур мана сисрӗ те ман патах пыраҕ. Ка-ка-ка! тет. Умах ҫитрӗ. Кӗреҫене тӑк-тӑк тӑк, сӑхаҕ сӑмсипе.

Мӗн пулаҕ-килет. кӗреҫене сулахай йенчен тытрӑм та (ваттисем унашкал ҫӗрте сулахайран ҫапма хушаҫҫӗ) лайӑхрах кӗреҫе ҫивӗчӗшӗпе шарт! тутартӑм.

Хурӗ те, кӗреҫи те тухатмӑшӗ те, таҫта, ҫук. Куҫа хупсах киле тепле ҫитсе выртнӑ. Хӑранипе тепле чӗре ҫурӑлман.

Ирпе ирех хӗвел тухсан тӑтӑм та ҫав Уҕакин арӑмӗ йенелле уттартӑм. Ӗнерхи ӗҫ пуҫран тухмасҕ. Ку хӑшӗ пулнӑши тетӗп — амӑшӗши, хӗрӗши?.. Патнерех ҫитетӗп... Ах тур, тур, тур, тур!.. Пӗтрӗ, пӗтрӗ, пӗтрӗ! тесе ма-

# „Капкăн“ çаклатса илнисем.

## Çĕнĕ „трактăр“.

Хĕрлĕ-Чутай вулĕçтăвкомĕнчи çĕр пайĕ пуçлăхĕ пĕрре çĕр сутне Атнар йалĕсем майлă тунă. Тепĕр каçне вăл йала ĕçме кайнă. Таврăннă чух, хытă килнипе, кăлтăрмачă тухса ӳкнĕ те икĕ çухрăм хушши тĕнĕлпе çул сухаласа пынă.




Чаплă трактăр шухăшласа кăларнă иккен çĕр пайĕ пуçлăхĕ. Трактăрĕ пенçинсăр-мĕнсĕрех кайат, хăсăкпа ерех анчах кирлĕ. 10 минутра пĕр утăма йахăн сухалат. Хакĕ хаклă мар. Илес пулсан атрĕсне: Хĕрлĕ-Чутай вулçĕр пайĕ. Парышниккăв аллине памалла, тесе çырмалла. Ун пек трактăр аме риккантсăсем те шухăшласа кăларайман. Сава.

---

кăрнă сасă илтĕнет. Чăнах та ку хур тухатмăшах пулниç, тетĕп.

Чĕтресех Утакин пӳртне кĕретĕп (пит хăранă çав). Пăхатăп: пӳртре урай варринче пĕр йапала тăсăлса выртат... Хур пулнă. Пуçĕ те татăлсах кайнă...

— Мĕн пулчĕха, кинемей?—тетĕп.

— Ара ĕнер çăмарта пусса ларакан хура такам кĕреçепе пуçне касса вĕлернĕ, тет. Кĕреçи те ак кунтах. 15 çăмарта айне лартнăчĕ... пĕтерчĕç, пĕтерчĕç, тесе йĕре пачĕ.

Çапла ĕнтĕ тухатмăш вырăнне хур пулнă. Халĕ ĕнтĕ тухатмăш çук та пуђ вăл, тетĕп. А. Петтоки.

## „Тискăнт“

Туй ачисем йурлаççĕ пултаратпăр пулмалла—пурте куçран пăхаççĕ. Кремйачĕв йалĕпе Шупашкар вулăсĕнчи пулăшу комиттечĕсем урăхларах сăмахсем каласа йурлаççĕ: пултаратпăр пулмалла—хамăр майлах тăватпăр, теççĕ. Кремйачĕвра (Шупашкар вул.) 5 кил çунса кайнă. Йалти тата вулăсри пулăшу комиттетĕнчен çав çунса кайнă çынсене пулăшу тĕлĕшпе тырă панă. Пĕр кулака 120 п. панă, ыттисене чухăнраххисене 30-шар пăт анчах. «Капкăн» хуçи шухăшĕпе пулăшу комиттетĕнче ларакансене урăхларах йурă йурлаттармалла Тискăнтпа та йурлама пултараççĕ пуђ вĕсем.

## „Саттана“.

Хаххолсем каланă йумахра ĕлĕк саттана (шуйттăн) çĕр çине сурнă та тусем пулса ларнă, вăл хăснă çĕрте кӳлĕсем пулнă. Хĕлеçри (Упи вул.) Суккăр Елекçи тейекен йумăç кĕленчешне манкаллă сурчăк сурса парат те, чирлисем сывалаççĕ, тесе ĕненеççĕ айвансем. Анчах сывални курăнмаст, йумăç кăсйине кĕмĕлпе хут укçасем кĕрсе выртни курăнат.

## „Прачвир майрисем“.

### I. Йалкор çырăвĕ.

Прачвир сутакан майрасем прачвир сутса пысăк услам тăваççĕ. Вĕсене, прачвир майрисене, паттент илтерме йурамасťши?

Йалкор Итихвейĕв.

### 2. Налок Управленийĕн отвечĕ.

Налоговое Управление Чувашфинотдела сообщает, что подсобный сельскому хозяйству промысел от обложения государственными налогами, кроме единого с/х. налога, освобождается.

Зав Налогов. Управ. Пахарев.
Зав. отд. прям. налогов Шитов.
Ст. делопроизвод. Долганов.
№ 11023/5.

### 3. Тепĕр йалкор çырăвĕ.

Уравăшра çĕвĕç Саппас Йакурĕ тумтир çĕленĕшĕн хаклă илет. Ун çине налок хума йурамасťши?

Йалти хресчен Ухваӊ.

### 4. Налок Управленийĕ ответ параť.

— указанный в заметке гр н к промысловому и др. налогам привлечен быть не может, т. к. по постановлению Н.К.Ф. от 26 сентября 1923 г. подсобный с/х промысел обложению налогами не подлежит.

Зав. Налогов. Управ. Пахарев.
Зав. отд. прям. налогов Шитов
Ст. делопр. Долганов.
№ 10969/5.

### 5. Йулашки ыйту.

Налок Управленийĕ прачвир пĕсернине те тумтир çĕленине те „подсобный с/х промысел“ тесе калаť. Хăшĕ тĕрĕс? Пирĕн хисеппе турă, тĕн йачĕпе сутуилу туни «подсобный с/х промысел» мар. Налок Управленийĕн кăнчелерĕнче „прачвир майрисен“ упăшкисем хăйсем лармаççĕши?

Х. Ура.

## Сатачсем.

(Пуçламăшĕ иртнĕ номĕрта).

6. Хусантан йанă телефонокрамă 16 сехетре Шупашкара çитнĕ. Пăсашир прахучĕ Хусантан Шупашкара 8 сехетре çитнĕ. Хусанпа Шупашкар хушши 136 çухрăм. Пĕр сехет хушшинче телефон миçе çухрăм кайаť, миçе хут прахутран хытăрах çӳрет телефон?

7. Мăн Илпешри (Шуп. вул.) Кукша Петĕр карчăкĕ, йумăç пăхса чирлĕ çынна сыватап тесе, кашни çынтан 1 тенкĕ çурă илет. Вăл каланипе сывалайман çынсем кашнийех ăна пуçран 2 шер хут çапасшăн.

Çулталăк хушшинче ун патĕнче 300 çын йумăç пăхтараť. Миçе патак çимелле пулаť 2 çул хушшинче Кукша Петĕр карчăкĕн (çулĕсем високоснăй мар)?

8. Тивĕшри (Чăваш-Сурăм вулăсĕ) ликвитатăр хут вĕренекен çамрăксене 1 саспалли палламаншăн 1 сехет çурăллăх тĕпсакайне хупаť. 100 страницăллă кĕнеке çинче мĕн çырнине пĕлеймесен миçе сехет тĕпсакайĕнче выçă лармалла пулаť (1 страницăра 4690 сас палли)?

## Шурум-пурум!

Опçутпайĕнче пухкалтери пӳлĕмĕн алăкĕ çинче, шурă çинче хурапа, таçтан инçетрен курăнмалли кивĕ саспаллисемпе „Бухгалтерскій отдѣлъ“ тесе çырса хунă. Опçутпайĕн пухкалтерийĕ, шурум-пурум пухакан тутарсем пек, кивĕ саспаллисене пухаť иккен.—Шурум-пурум! Пĕр патаклă І-сене, Ѣ-сене, Ъ-сене пухатăп! Ей, шурум-пурум! Старйо перем!

Хура Ура.

Чувашоблит № 1182. Чебоксары, Тип. Чувашиздата.